ЧУНА УÇÇА



Б.Чиндыков

# Çил вĕрмесен вăй илеймест кăвайт

«Литературăна вăл çаврăсил пек пырса кĕчĕ. Çĕнйĕркелӳ тапхăрĕ пуçланнăччĕ ĕнтĕ, анчах «лайăх тĕрĕслемесĕр çул памалла мар» тенине идеологи пуçлăхĕсенчен анчах мар, ахаль çыравçăсенчен те илтме пулатчĕ. Литературăра ят илме парти шкулне пĕтернисене çăмăлтарахчĕ. Ыттисен вара Писательсен союзĕн секцийĕсем мĕн каласса кĕтмеллеччĕ, редакторсен куçĕнчен пăхмаллаччĕ, çамрăк литераторсемпе ĕçлекен комисси умĕнче пуç таймаллаччĕ. Борисăн çак нушана тӳсмелле пулмарĕ. Литература институтĕ пĕтернĕ çамрăкăн Мускаври сумлă хаçатра шăналăк пек анлă калавĕ кĕрлесе тухрĕ. Чăвашра пичетленнĕ пĕрремĕш хайлавĕсем вулакансене нумай калаçтарчĕç. Партпуçлăхсем çамрăк çыравçă çине чалăшшăн та пăхнă пуль, анчах «тĕрĕс çул» кăтартма шутламан, ма тесен вăл ирĕклĕх уçăлса пынă тапхăрта пырса кĕнĕ литература уничине. Çак тапхăрта журналсен редакторĕсем улшăнса кайнăччĕ, хăйсене консерватор тесе каласран хытă хăратчĕç.

Пурте пĕлеççĕ, пысăк таланта «туптанин» усси те пур, вăл çирĕпленсе аталанать. Çăмăллăн хăвăрт çĕкленекен çыравçă çемçешке пулни часах палăрать. Анчах ку сăмах Чиндыков пирки мар. Ун пултарулăхĕ çултан çул вăй илсе пынине пурте куратпăр. Нумаях пулмасть çамрăк çыравçа Чăваш Республикин патшалăх премине пачĕç. Чысĕ пысăк, анчах çыравçă пуçне каçăртнине курман...» Çак сăмахсене эпир 12 çул каялла «Советская Чувашия» хаçатра каланăччĕ. («Служенье муз не терпит суеты». - «Сов.Чувашия», 1995, апр.29.) Унтанпа пурнăç чылай улшăнчĕ: Борис халь Мускавра пурăнать. Юлашки çулсенче ун сасси пичетре илтĕнсех каймарĕ. Вăл кунти çитмен пурнăçа чăтаймасăр тĕп хулана таптарнă текенсем пур, тĕрĕсех-ши çакă?

Литературăран тĕппипех писнĕ-ши вăл е «алли кĕçĕтсен» халь те кăранташ тыткалать? Çакăн пирки ыйтса пĕлес килчĕ чи малтанах. Тата шухăш енчен çыравçă мĕнле улшăннă? Çакна вăл «иртнĕ ĕмĕрте» хаçатра каланă сăмахсемпе танлаштарса пăртак тĕпчесшĕн.

- Халăх çăварĕ хапха теççĕ, эпĕ Мускава «тарни» пирки, тен, тĕрлĕрен калаçакансем пур, - шухăша кайса сăмахне пуçларĕ çыравçă. - Анчах тĕп сăлтавĕ калама çук ансат. Мускав мана яланах илĕртнĕ, мĕншĕн тесен кунта ман çамрăклăхăн пĕр пайĕ иртнĕ-çке. Эп Литература институтĕнче вĕреннĕ чухне пурнăç пач урăхлаччĕ, тĕрлĕрен пулăмсене, вăл шутра литературăна та пысăк шайран пăхса хаклатчĕç. Çакă, паллах, чĕрене кĕрсе юлнă.

*«...Не будь в жизни литинститута - не знаю, состоялся бы я как литератор или нет. Институт привил вкус к творчеству, независимости и свободе. Да и историю партии, марксистско-ленинскую философию там проходили не так, как это было принято в других вузах. Нас буквально учили читать между строк. Темой моего реферата по истории философии, к примеру, было что-то связанное с Кьеркегором. На семинарах по текущей литературе мы проходили эмигрантов Василия Аксенова и Сашу Соколова, а творчество Василя Быкова учили по таким его повестям, как «Мертвым не больно» и «Круглянский мост», которые в то время находились под негласным запретом - после их первой и единственной публикации в «Новом мире» Твардовского их не разрешали включать в сборники писателя. А потом ни в одном другом вузе СССР я вряд ли прослушал бы такие достаточно специфические курсы, как «Современная литература США», «Современная японская литература», «Новый латиноамериканский роман», которые вели ведущие специалисты в этих областях и на которых мы получали такую информацию, которую нигде больше не смогли бы найти. Именно в литинститутские годы своей жизни мне посчастливилось подружиться с Геннадием Айги - не с тем признанным маэстро, каковым он сейчас является, а с поэтом легендарно-полуподпольным, который, на мой взгляд, выжил в те страшные годы благодаря двум обстоятельствам: наличию у него зарубежных друзей-славистов и наличию малой чувашской родины, которая, за исключением нескольких друзей, его так безжалостно не любила».*

Тепĕр сăлтав та пулнă (анчах шутлани пурнăçа кĕреймерĕ): «Лик Чувашии» журнала ячĕшĕн мар, чăнласах Раççей шайĕнче кăларасшăнччĕ. Сорос фончĕн грантне илни те пире хавхалантарчĕ. Геннадий Айхи сăвăç тата ун чухнехи культура министрĕ Виталий Иванов çак шухăша ырланăччĕ. Мускаври чăваш представительствине тата тĕп хулари чăваш обществине соучредителе кĕртрĕмĕр. Анчах лару-тăру хăвăрт улшăна пуçларĕ, культура министрне урăх çынна лартрĕç. Хамăн пурнăçра та йывăрлăхсем пулчĕç, анне рак чирĕпе асапланса вилчĕ. Кăмăл хуçăлчĕ, вара журнал кăларас шухăша пăрахма тиврĕ.

*«...Идея «русского» журнала в республике давняя, но в те годы она была неосуществима, автоно-*

*миям по рангу не полагалось иметь свой русский журнал. А заставило меня взяться за «Лик Чувашии» многое: да, и о хлебе насущном забота, и наличие прекрасных авторов и сотрудников, без которых журнал не смог бы состояться, и такой человек во главе Министерства культуры и по делам национальностей, который сразу понял идею журнала и поддержал ее, и хорошая литература и культура Чувашии, отражением которых журнал является. Журналу даже не нужно было искать своей ниши, необходимость в подобном издании ощущали все... К тому же журнал-то ведь возник не на пустом месте, отсчет своих номеров и традиций мы ведем с альманаха «Дружба».*

**- Эсӗ пӗччен ытларах тапӑлтатнӑ пулмалла, ҫавӑнпа ҫунатусем хӑвӑрт усӑннӑ.**

- Мӗншӗн пӗччен? Чи хӗрӳллӗн пулӑшакан Чӑваш Республикин Мускаври представительствин пуҫлӑхӗн ҫумӗ Н.В.Воронцов пулчӗ, вӑл пулман пулсан эп В.И.Кисин патне лекейместӗмччӗ. Чӑваш «посолӗ» журнал кӑларас шухӑша ырларӗ, пулӑшмалли майсем шыраса пӑхма шантарчӗ. Геннадий Николаевич Айхи те лайӑх канашсемпе пулӑшатчӗ. Унпа журналӑн шайне тытса пырас ыйтупа ялан калаҫнӑ. Анчах шаннӑ кайӑк йӑвара пулмарӗ.

Акӑш-макӑш пысӑк хулара хӑвӑн вырӑнна мӗнле тупмалла? Мускава хаяр хула теҫҫӗ, куҫҫуль юхтарнине вӑл ӗненмест. Аса илсех кайрӑм: институтра эпӗ факультатив майӗпе туркӑ чӗлхи вӗреннӗччӗ, вулама-ҫырма пӗлетӗп, анчах калаҫасси пулсах каймасть, туркӑ ҫыннипе куҫа-куҫӑн сӑмахласа курман. Ун чухне шӑпах туркӑ фирминче Атнер Петрович Хусанкайӑн мӑшӑрӗ ӗҫлетчӗ, унӑн тӑванӗ вӑйлӑ куҫаруҫӑ пулнӑ май хӑй пӗлекен туркӑ фирмине мана вырнаҫтарчӗ. Калаҫу чӗлхи айвантарах пулин те илчӗҫ. Тӗп тивӗҫе пурнӑҫланисӗр пуҫне ытти вактӗвек ӗҫсем те хушатчӗҫ. Йывӑрлӑхсем пулчӗҫ малтанах: мӗн каланине ӑнланаймастӑм, каҫару ыйтса майӗпенрех пуплеме тархаслаттӑм. Вара сӑмахӑн-сӑмахӑн тенӗ пек хӑнӑхса пытӑм, пӗр-ик уйӑхран ман чӗлхе уҫӑла пуҫларӗ, ҫур ҫултан «ку ача вӗренсе ҫитрӗ» теме пуҫларӗҫ. Туркӑ чӗлхине халь ирӗклӗнех пӗлетӗп темелле: тӗрлӗ текстсене вуласа куҫаратӑп, ҫыратӑп, калаҫатӑп. Ҫакӑр ҫиес тесен - вӗренмех тивет. Вӑл анчах та мар, чӑвашла шухӑшланӑ чух тӑтӑшах туркӑ сӑмахӗсем «хӗсӗнсе» кӗреҫҫӗ, икӗ чӗлхен тытӑмӗ пӗрешкел, ҫавӑнпа пулӗ.

Ҫакна хушса калас килет. Туркӑ чӗлхи вӗренме мана Ҫӗпӗрте ӳснӗ чӑваш ачи Федя Трофимов чылай пулӑшрӗ. Вӑл Кемерово университечӗн ют ҫӗршыв чӗлхисен факультетне пӗтернӗ, нимӗҫ чӗлхине аван алла илнӗ. Турккӑлла вӑл шыв пек юхтаратчӗ. Пӗлмен сӑмах такӑнтарсан тӳрех ун патне шӑнкӑравлаттӑм. Турккӑсем те ӑна пит хисеплетчӗҫ. Фахри Чакмак ят тупса панӑччӗ, «вут пек Хӗветӗр» тени пулать ҫакӑ.

**- Паллах, коммерцин такӑр ҫулӗ литературӑн тумхахлӑ та кукӑр-макӑр сукмакӗнчен аякра выртать.**

- Ку тӗрӗс. Вунӑ ҫул хушшинче нимех те ҫыраймарӑм. Тухса каяс умӗнхи 1996 ҫул питӗ тухӑҫлӑ пулнӑччӗ: «Хан таврӑнни»,

«Швеци сĕтелĕ» калавсем, «Патша пахчи» пьеса çыртăм. Анне килĕнче питĕ тухăçлă ĕçленĕччĕ. Литературăри çамрăклăх çакăнпа вĕçленчĕ пулмалла. Тепĕртакран кĕркунне аннен чирĕ палăрчĕ, вăл çĕре кĕнĕ хыççăн урăх тухăçлă ĕçлесси пулмарĕ. Тата мĕн çыртăм? 1998 çулта çулла «Масаркасси ясарĕн 77-мĕш матки» фарс. Начар мар лартрĕç ăна, сцена çине кăларас ĕçе эп пачах хутшăнман. Сăмах май каласан, театр пьесăн путишлĕхне чылай çемçетрĕ, тӳлек комеди пекрех пулса тухрĕ спектакль. Çамрăксен театрĕ Мускава пырсан халăх аван йышăннине палăртас килет. Ун чухне драматурга пăртак сăмах тиврĕ: шӳтсем ытла та ирĕклĕ пулса тухнă иккен. Анчах, ман шутпа, хайлавăн жанр уйрăмлăхне шута илмесĕр калаçрĕç. Мĕн вăл фарс? Ăна-кăна юри ӳстерсе, пысăклатса кăтартни. Бахтин «кулăш культури» пирки каланă чух чи çӳлти тата чи аялти шайсене палăртать, вĕсенчен пăрăнса иртейместĕн, вĕсем пурнăç саккунĕсемпе питĕ тачă çыхăннă. Пĕр сăмахпа каласан, мана кăштах ăнланаймарĕç, анчах эп кӳренмерĕм. 2002 çулта «Хура чĕкеç» пьеса çыртăм. Тĕп шухăшне хăй вăхăтĕнче Ипполит Агакова каласа панăччĕ те вăл мана самай хавхалантарнăччĕ, Вера Кузьминан пысăк талантне тата та анлăрах кăтартма пулать ку япалапа тесе. Произведенире пĕртен-пĕр герой - Чĕкеç ятлă хĕрарăм, вăлах вĕçен кайăк та: çурма миф, çурма пурнăç. Жанрне эп монодрама тесе палăртнăччĕ. «Моно» тени, тен, тĕрĕсех те мар, ĕлĕк ăна пĕр актер валли çырнă пьеса тесе калатчĕç. Тематика енчен илсен вăл нумай саслă хайлав пек пулса тухнă. Темшĕн сцена çине пьеса йывăрпа тухрĕ: авторĕн ячĕ хăратрĕ-ши е паллă артистка репутацине кунашкал пьесăпа «пăсас» теменни тĕп вырăнта пулнă - татсах калама пултараймастăп çакна.

Эппин вунă çул хушшинче ик япала çырнă. Питĕ сахал. Çырма пуçланисем, шутласа хунисем чылай, анчах вăя урăх ĕçпе пĕтерме тивет. Турра шĕкĕр, халь ывăл пысăкланчĕ, шкул пĕтерчĕ, уншăн явап тытмалли сахалланчĕ, хăй ĕçлесе илет.

**- Сайра тĕл пулакан ят тупса панă эсĕ ывăлна - Марк...**

- Чăваш хушшинче Петĕрсемпе Йăвансем туп-тулли те çĕнĕрех ят шырама тиврĕ. Пиллĕке çитиччен Марк чăвашла кăна калаçнă. Вулама та хăнăхтарнă ăна. Ӳсерехпе вăл, сăмахран, Александр Артемьевăн «Салампине» пит кăсăкланса вуласа тухрĕ. Пурнăç йĕрки çавнашкал, ним тума та çук: тăван чĕлхе паянхи çамрăкшăн малти вырăнта тесе калаймăн. Мускав йĕркипе çакна ăнланма пулать пек, анчах чăвашсен тĕп хулинче те чăваш чĕлхин статусĕ çӳллĕ шайра мар. Çамрăксем çакна тӳрех сисеççĕ.

**- Çулсем иртеççĕ, Борис. Кайран вăйпитти вăхăта усăсăр иртертĕм темелле пулмĕ-ши?**

- Реклама директорĕнче ларнă чух литературăпа аппаланма вăй юлмасть. Халь лару-тăру кăштах улшăнчĕ. Туркка фирми реклама укçи-тенкине ытларах Украинăра усă курма йышăнчĕ, Мускавра ĕç сахалланчĕ. Эрнере пĕр кун кăна ĕçе тухмалла, мана консультанта куçарчĕç. Апла пулсан çыру сĕтелĕ хушшинче ларма май пур. Ман характер çавнашкал: илемлĕ про-

изведенипе аппаланнӑ чух пӗр-пӗр путвала хупӑнса, никампа калаҫмасӑр-курнӑҫмасӑр пурӑнас пулать. «Урасмете» шӑпах питӗрӗнсе ларса ҫырнӑччӗ.

*«...Раньше легче работалось по ночам, но сейчас не получается, для этого все-таки надо быть полностью свободным от службы... Серьезное творчество, конечно, требует уединения. Мне же последние несколько лет оно недоступно, и потому сказать, что сейчас работаю над завершением такого-то сборника новелл или такой-то пьесы, пока не могу. Хотя понимаю, что никакие причины субъективного или объективного порядка не могут служить оправданием того, что приходится зарывать талант в землю»*.

**- Ялти киле пултарулӑх лабораторийӗ туса яма май килмест-и?**

- Палтайри ҫуртра халь ҫывӑх тӑван пурӑнать. Таджикистанра лару-тӑру япӑхланнӑ хыҫҫӑн куҫса килме хамах йыхравларӑм ӑна. Шел, темиҫе ҫул каялла ун арӑмӗ, питӗ кӑмӑллӑ вырӑс хӗрарӑмӗ, врачсен тимсӗрлӗхне пула вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Тӑван киле, паллах, ялан чун туртать, унта ӗҫлесе ларма никам та чӑрмантарас ҫук.

**- Пӗлетӗп, эсӗ Шупашкара «Нарспи» мюзикла туса ҫитерес тӗллевпе килнӗ. Пултарулӑх ушкӑнӗ санран нумай ыйтать-и?**

- Манӑн юрӑ сӑмахӗсене майласа ҫитермелле. Тата композицишӗн кӑштах яваплӑ: материала мӗнле вырнаҫтарассине татса памалла. Текстсене хатӗрленӗ чухне эпир оригинала тӗпе хунӑ. Халь шутлатӑп та, вӗсене кӑштах улӑштарсан, паянхи кунпа шайлаштарсан аванрах пулма кирлӗ.

**- Тен, вулакансем пурте пӗлмеҫҫӗ, ӑнлантарса пар-ха, мюзикл оперӑран мӗнпе уйрӑлса тӑрать.**

- Ансатласа каласан, мюзикл вӑл эстрада чӗлхине куҫарнӑ опера. Паллах, унта симфони оркестрӗ те хутшӑнать. Юррисем эстрадӑна ҫывӑх пулмалла, хореографипе сценографи пӗлтерӗшӗ пысӑк. Пуриншӗн те чи йывӑрри мюзикл чӗлхине алла илесси. Николай Казаков композиторпа хамӑр ӗҫе вӗҫленӗччӗ пек. Халь мӗн ҫырнине тепӗр хут пӑхса тухатпӑр, хушатпӑр, ҫӗнететпӗр. Эп Мускавра пурӑнни пӗрлехи ӗҫе, паллах, кӑштах йывӑрлатать.

Халӗ Европа культуринче американизма йышӑнсах кайманни яр уҫҫӑн палӑрчӗ. Французсем, сӑмахран, кинотеатрсенчен хӑйсен фильмӗсене хӗссе кӑларма памаҫҫӗ. Мюзикл жанрӗнче те вӗсем глобализма хирӗҫ тӑмалли майсем тупнӑ. Бродвей мюзиклӗ йӑлтӑр-ялтӑрпа илӗртет пулсан, французсем чуна тивекен кӗвӗсемпе, уҫӑмлӑ сюжетпа куракана тыткӑнлаҫҫӗ.

Чӑваш условийӗсенче, паллах, анлӑ, вӗресе те ялкӑшса тӑракан спектакль кӑларма ҫӑмӑлах мар. Апла пулсан вӑйсене пӗрлештерес пулать. Культура министерствинче те, пултарулӑх ушкӑнӗнче те ҫакна аван ӑнланаҫҫӗ.

**- Ҫӳлерех асӑннӑ интервьюра литератор пулма питех те йывӑр пулни пирки каланӑччӗ. Паян ҫав предложени вӗҫне виҫӗ кӑшкӑру палли те лартма пулать пуль.**

- Эпир вӗреннӗ вӑхӑтра мӗнле хакланӑ литературӑна? Хӑш-пӗр кӗнеке вуламалли япала анчах пулман, вӑл кӗлтумалли япала пекрех шутланнӑ, ҫыравҫине, паллах, Турӑ шайӗнче курнӑ.

Йĕркеллĕ кĕнеке çырса кăларма ун чухне те çăмăл пулман. Паян вара? Эп пачах май çук тесе каласшăн мар. Хуçăлман çыравçă йĕркеллĕ япала çырса пăрахма пултарать, кăларма та, тен, май килĕ, анчах çав хайлав халăха унченхи пек тытса илеймĕ. Уйрăм ушкăнсем, литературăна тĕпчекен профессионалсем е вулама юратакан уйрăм çынсем кăна ун пĕлтерĕшне ăнланса хак пама пултарĕç. Литература вăл этемĕн шалти пурнăçĕ: ăшри вăрçăсем, çĕнтерӳсем, сана парăнтарсан çĕнĕ тытăçăва хатĕрленни... Литература ахаль пурнăçра ним уссине те памасть, пурăнма вĕрентмест.

**- Канса илме хăш чух пулăшать пек...**

- Ку урăх япала. «Чтиво» тенине литература тесе хаклас та килмест. Анчах вăл та кирлĕ. Леонид Агаков пек çыракансене, тен, вулакансем хакланă пулĕччĕç. Анчах пирĕн пек халăхсен канса рехетленмелли литература та май çук хавшанă. «Массовое чтиво» текен япалана 2 пин тиражпа кăларсан та саланса пĕтеймест, вăл хăй хакне кăлараймасть.

Анчах халăх, ман шутпа, апатçимĕçшĕн, тумтиршĕн, хăтлă çуртйĕршĕн кăна тапаланса пурăнаймасть. Çын пĕтĕм халăх е уйрăм ушкăнĕсем ăçталла сулăннине, çакăн сăлтавĕсене пĕлесшĕн, ун çылăхлă чунне çырлахтарма тĕн хăй тĕллĕн кăна пултараймасть (чиркӳ халĕ организаци шайĕнче). Апла пулсан искусствăпа литературăн чăн пĕлтерĕшне çынсем майĕпен ăнланса пырĕç, хаклама пуçлĕç. Арпашу тапхăрĕ тĕппипех вĕçленсен, пурнăç чăнласах та йĕркеленме пуçласан пурте çакна туйса илессĕн туйăнать.

**- Тен, кĕтсе тăмалла мар, юхăма хăвăртлатмалла камăн та пулин? Сăмахран, патшалăхăн.**

- Совет вăхăтĕнче питĕ йывăр та хирĕçӳллĕ тапхăрсем пулнă. Анчах ун чухне тилхепене алран вĕçертмен. Пĕр енчен хĕсĕрленĕ пек ăнланнă эпир çакна, анчах наци культурине аталантарас тени сăмах анчах пулман. Майсем самаях пулнă: журналсем 50 пин тиражпа тухнă, кĕнеке, хаçат-журнал йӳнĕ пулнă.

Хальхи вăхăтра çыхланса ларнă тĕвве чăваш шайĕнче кăна салтса яма май çук. Çĕршывра наци культурин ыйтăвĕсемпе уçăмлăх çук. Ку паллă япала, специалистсем тăтăш палăртаççĕ çакна. Пирĕн Н.В.Федоров президент та пĕрре çакăн пирки пăшăрханса каланăччĕ, ун сăмахĕсене Интернетра тупса вуланăччĕ. Юлашки перепиç хыççăн Мускаври политиксем каçăхса кайса Раççее мононациллĕ çĕршыв теме пуçларĕç, Европа стандарчĕсемпе илсен эпир пĕр халăх иккен: 80 процентчĕ «россиянсем». Перепиçĕн хăйĕн тĕллевĕсем пулнă, ун пĕтĕмлетĕвĕсене хăш-пĕрисем питĕ кĕтнĕ. Кирлĕ кăтартусене «пăчăртаса» кăларнă хыççăн пысăк пĕтĕмлетӳсем тума майсем тупăннă: тенденци апларах, халăхсем хутăшса пĕрпекленсе пыраççĕ, апла пулсан уйрăм халăхсен культурисене пулăшса тăккаланма кирлех те мар. Паллах, çĕршывра урăхла вăйсем те пур. Енчен те Раççей патшалăхĕн халăхсене аталантарса пырас тĕллев пулсан, паллах, вак халăхсене пушшех те пулăшмалла. Вырăс литератури, чĕлхи капашсăр вăйлă, вĕсем парăнмĕç-ха. Патшалăх пулăшмасăрах коммерци йĕркипе мĕн чухлĕ кĕнеке ту-

хать, вăл шутра классика та тупăш парать, пиншер те пиншер çынна çăкăр çитерет. Вак халăхсен чĕлхи, культурипе литератури вара хĕсĕнсе, сакайĕнчи çĕрулми калчи пек шуранка та вăйсăр аталанать. Сăмахран, Мускавра Раççей литературисен прозин темиçе томлă антологийĕ тухрĕ, ăна федераллă программăпа кăларнă. Коммерци саккунĕсемпе ĕçлекен издательствăсем кун пек кĕнекесене кăлараймаççĕ. Çак антологире ман калав («Хан таврăнни») тухрĕ, кăштах гонорар та илсе куртăм. Чăваш тата ытти халăхсен çак çулпах каймалла пек туйăнать. Ан тив, уйрăм çынсем те çак ĕçре тăрмашчăр, кĕнеке кăларса укçа туччăр. Анчах пĕлтерĕшлĕ кĕнекесене патшалăх хакласа пулăшса кăларса пытăр. Çак çултан пăрăнас пулмасть.

Тата патшалăх çыннисен çакна асра тытмалла пек туйăнать. Тилхепине вĕçĕмсĕр унта-кунта турткаласан çыравçă ĕçлеме пăрахать. Ăна ирĕклĕх кирлĕ. Вăл хăшхăш тапхăрта оппозици сулнăкне кайма пултарĕ. Куншăн хăраса ўкме кирлĕ мар. Сăмахран, коммунистсен те чеелĕхĕ пулнă. Александр Чаковский тытса пынă «Литературная газета» изданиех илер. Ятарласа пăс кăларма, ирĕклĕх пур пек кăтартса интеллигенцие лăплантарма кăларнă ăна. Астăватăп, Эдуард Лимонов диссидент пирки мĕнлерех çыратчĕç: паллах, хурлатчĕç, анчах ăна-кăна халăха пĕлтерме май паратчĕ çакă.

Аталанма тĕрлĕшухăшлăх кирлĕ - ку паллă япала. Чăваш пурнăçĕнче те пĕлтерĕшлĕ çакă.

**- Пулса çитмен пасар йĕрки, тен, пысăк йывăрлăхсем кăларса тăрататъ. Планлакан экономика мĕнне пĕлмен, ĕмĕр пасар йĕркипе аталаннă çĕршывсенче литература хисепре-и?**

- Эп ун пек çĕршывсенче пурăнса курман, ыйтăва шал енчен çутатаймастăп. Турккăсем калакаланинчен çакна пĕлетĕп: халăхĕ капашсăр пысăк (20 миллион), анчах вулакан тĕлĕнмелле сахал. Лару-тăру пирĕннинчен те йывăртарах пек. Проза пĕр пин тиражпа пичетленет. Хăш-пĕр романа 4-5-мĕш кăларăм тесе кăтартнă. Ку мĕне пĕлтерет? Çуркунне, çулла е кĕркунне пĕчĕк-пĕчĕк тиражсемпе çапнă иккен, 200-300 экземпляр кайса пĕтет - тата кăлараççĕ.

**- «Аван-и» хаçат кăларнă тапхăра мĕнле хаклатăн паян?**

- Лайăх вăхăт тесе аса илетĕп. Анчах хаçата эп пĕччен туман, хастар ачасемпе эртеллешсе кăларнă. Пулăшакансем чылай пулнă. Мĕнрен пуçларăмăр? А.Мерхолов депутат 6 рулон хаçат хучĕ парнелерĕ (ун чух хут тупма çукчĕ), М.Лукиянов тиесе килме пулăшрĕ. Ун чух ирĕклĕ шухăш калас текенсем нумайччĕ. Тата пичетленекен япаласен шайĕ пирки те шутланă. Эпир ун чухнехи чăваш журналистикине те кăштах витĕм кўнĕ пек туйăнать. Сăмахран, «Тантăш» хаçат вăл вăхăтра самай улшăнчĕ, «Хыпар» та хăюлланчĕ. Тата çакна палăртасах пулать. Кашни ĕçрех ыррисĕр пусне тĕксĕмрех ен те палăрать. Подражательсем тĕксĕмреххине тўрех ярса илеççĕ, урса кайсах «аталантарма» тытăнаççĕ. Ку журналистикăра кăна мар, эстрадăра та палăрать. Шайне малтанласа лартма пулать, анчах вĕçĕм тытса пыма йывăр. Паллах, «Аван-и» хаçата татах кăларма пулатчĕ, тен, васкарăмăр хупма. Анчах поли-

тикăри градус улшăнчĕ, хамăр ывăнса çитнĕччĕ. Вара хупас терĕмĕр. Ман ĕмĕт тата мĕнлеччĕ? Эпир мĕнле тумаллине кăтартса панă, ыттисем çак ĕçе малалла ярасса шаннăччĕ. Килетĕп те Мускавран, «Аван-и» евĕрлĕ 2-3 хаçат тупса вулама пулĕ тесе...

*«...Создание частной недотируемой газеты меня научило ценить ту свободу и в некотором роде беззаботность, которые царят в редакциях государственных изданий. Если бы я предвидел, в какой плоскости пойдет дальнейшее развитие страны, я тогда вряд ли бы взялся за издание газеты. Сейчас-то каждому ясно, что в нынешних условиях невозможно существование ни от кого не зависимой чувашской газеты, какой бы популярной она ни стала. А тогда тираж в 10 тысяч экземпляров обеспечивал рентабельность, и это без единой крупицы рекламы. Еще это научило меня уважать тех людей, которые пытаются честно заниматься своим делом, своим малым или большим бизнесом.*

*- Газета «Аван-и» выбрала эротическое направление, хотя и другие вопросы неплохо освещала. Было ли это связано с убеждением, что чувашскую молодежь необходимо просвещать, или пристрастия членов творческого коллектива повлияли?*

*- Скорее всего и то, и другое. Не надо забывать, что это была частная газета и каждую копейку нам приходилось зарабатывать самим. А эротики в ней было не больше, чем в «Московском комсомольце» или «Собеседнике». В целом ориентировались на «Собеседник». В «Аван-и» была и серьезная политика, и культура, и эротика, и если последнее привлекало внимания больше, чем остальное, то таковы, значит, были запросы общества».*

**- Ĕмĕтленсе илер-и? Сăмахран, Чăвашра Ехрем хуçа евĕрлĕ пуян çын ӳссе çитĕннĕ. Чĕнет те калать сана: «Борис, акă сана миллион тенкĕ, халăхшăн усăллă тăкакла ăна». Çак укçапа эсĕ мĕн тунă пулăттăн?**

- Пĕр-пĕр йĕркеллĕ хаçат кăларнă пулăттăм. Анчах пĕлсе тăрас пулать: миллион тенкĕ ялан çуса тăмĕ. Эппин малашлăха шута илсе тапранса каяс пулать. Хаçата туса çитерме виçĕ çул кирлĕ, кайран вăл хăй тытăнса тăма пултартăр. Тĕрлĕшухăшлăха тĕпе хурса ăна тытса пынă пулăттăм.

Тата талăкĕпех чăвашла калаçакан радиостанци йĕркеленĕ пулăттăм. Тутарсен ун пек радиостанци иккĕ таранах, якутсемпе пушкăртсен те пур. Чăваш музыкине унта хисеплĕ вырăн парĕç, вырăс, ют çĕршыв, кӳршĕри халăхсен юррисем кунĕн-çĕрĕн янăрĕç, хыпарсем те пулĕç, кăмăллă, чăвашла таса калаçакансене кĕненксем мăй та ... чĕнĕпĕр микрофон умне.

**- Шупашкарта талăкĕпех сĕрлекен радиостанцисем эфирта мĕнлерех «кĕшĕлтетеççĕ». Анчах вĕсем вилсен те пĕр чăваш юрри парас çук, чăвашла сăмах илтсенех перĕнсе вилме хатĕр унти çынсем.**

- Пĕр сăлтав ялан вĕсен: «Это не наш формат». Комплексем питĕ пысăк унти ачасен: хăйсен таçта чăваш юнĕ пур, анчах çакна такам пĕлесрен чĕтресе пурăнаççĕ. Çавăнпа «неформат» текен пит модăллă пулса кайнă сăмахпа витĕнеççĕ.

Анчах... Калама ансат, шайне кăтартма пулĕ, тытса пырасси

пулӗ-и? Пирӗн, чӑвашсен, кирек хӑш проект та шай чакса кайнинпе путланать. Нуша ку. Пысӑк нуша! Тен, 10-15 çултан мӗн те пулин улшӑна пуçлӗ.

**- Эсӗ университетри журналистика факультечӗн студенчӗсемпе тӗл пулу иртертӗн. Мӗн каласа патӑн çамрӑксене?**

- Ыйтусем тӗрлӗрен пулчӗç. Сӑмахран, вӗсене реклама тупас е вырнаçтарас ыйту кӑсӑклантарать. Чӑваш хаçачӗсем халь пӗлтерӳсем мар, «объявленисем» кӑлараççӗ. Вулаканӗсем пурте чӑваш, анчах реклама ялалине чӑвашла çавӑрса калама тӑрӑшмаççӗ. Реклама паракан чӑваш чӗлхине хирӗç иккен. Чӑвашлӑха иккӗмӗш сортлӑ ялала тесе шутлама пуçларӗç каллех. Çакна мӗнле майпа сивлеме пулать-ха? Хӑть мӗнле проект та çӳллӗ шайра пулмалла, вара никам та хурласа калаçаймӗ, чи маттуррисем сан патна туртӑнӗç.

**- Паян мӗнле кӗнекесем тухнине пӑхса пыратӑн-и?**

- Шел, вӑхӑтран вӑхӑта кӑна çакланаççӗ чӑваш журналӗсемпе кӗнекисем ман алла. Мускавра Петӗр Мульдияров врач журналсем çырӑнса илет, ӑна-кӑна пӗлтерсе тӑрать. Атнер Хусанкай калаçтаракан ялаласемпе паллаштарать хӑш чух. Çавӑ кӑна.

Тӳррипе каласан, эпӗ паянхи вырӑс литературине те сӑнаса пыман. Чӑн-чӑн литература сахал тухать пулмалла. Рекламӑпа илӗртекен кӗнекене илетӗн те - темӗнле пиçсе çитменнтерех ялала анчах иккен. Эпир Распутин, Белов, Айтматов кӗнекисене вуласа ӳснӗ. «Йӑвашрах» кӗнекесене чӗре сивлет. Чӑн-чӑн литературӑра пурнӑç таппи пулмалла. Тути-маси çук пулсан мӗншӗн ахаль «чӑмламалла»?

**- Мускавра «литература негрӗсем» йышланса кайнӑ теççӗ. Вӑт çӑкӑр çиеççӗ çав ачасем! Чӗнсен кайнӑ пулӑттӑн-и?**

- Темӗн пек илӗртсен те литературӑри «хура» ӗçе тума килӗшес çук. Тунмастӑп, кризис вӑхӑтӗнче çӑмӑллӑн вуланакан ялаласем çырас шухӑш пулнӑ. Халӗ чун ыратӑвне Валентин Распутин пек палӑртса, анчах Анӑçри пек çӑмӑллӑн вуланакан кӗнекесем çырас килет.

**- Эппин, пуçӗпех сивӗнмен литературӑран?**

- Пуçласа хунӑ ялаласем пур - проза та, драматурги те. Тӗпленсе ӗçлес пулать. Çакна лайӑх ӑнлантӑм: паян кайса ӳкес пек ӗçлесен те пуяймастӑн. Мана нумай кирлӗ мар. Тата темиçе çултан пурнӑç «кӑнтӑрли» урлӑ каçатӑп, хӗвелӗм анаçалла сулӑнать, çакӑ шутлаттарать. Литература ман шӑпа пулса тӑнӑ пулсан, каллех турта хушшине тӑрса вӑй пур таран тапаçланасах пулать.

«Шупашкара хӑçан таврӑнан?» - тесе ыйтаççӗ хӑшӗсем. Мӗн калас? Чун туртать кунта - пытармастӑп. Анчах килсен кӑмӑла пӑсаканни яланах тупӑнать. Çавӑнпа Чӑваш çӗрӗ аякран пӑхмалли илемлӗ ялала пек пулни, тен, пултарулӑхшӑн аванрах.

**Валерий АЛЕКСИН калаçнӑ**